Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне ăна икĕ хутчен суйланă.

Тивĕçлĕ канăва тухсан та Мария Зиновьевна колхозри ĕçрен уйралман, ĕçпе те, сăмахпа та ялти çынсене хавхалантарса пынă. 1972 çулта ăна «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

1999 çулхи çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче ял хуçалăх производствин талантлă организаторĕ йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă.

Вăрăмпуç ялĕнче Социализмла Ĕç Геройне Мария Зиновьевăна тата унăн мăшăрне, нумай çул хушши колхоз ертӳçи пулнă Василий Платонова асăнса асăну хăми уçнă.






Дети Марии Зиновьевой:
Михаил, Руслан,Ираида, Владимир
1999 год

## *Библиографи:*


1. Прокопьев, В. П. Вăрăмпуçĕнчи çĕр ăстисем : [Чăваш АССР тава тивĕçлĕ агрономĕ В. Н. Платоновпа унăн мăшăрĕ Социализмла Ĕç Геройĕ М. З. Зиновьева çинчен] / В. П. Прокопьев. - Шупашкар : [и. ç.], 2011. - 119 с. : ил.
2. Владимиров, А. Хăй çулĕнчен пăрăнман / А. Владимиров // Хыпар. - 2006. - 23 пуш.
3. Мария Зиновьевна Зиновьева : [некролог] // Хыпар. - 1999. - 31 çурла.
4. Прокопьев, В. Çĕре юратса, уншăн вăй хурса / В. Прокопьев // Канаш ен. - 2002. - 10 юпа.
5. Зиновьева Мария Зиновьевна // Край Цивильский : краткая энцикл. р-на. - Чебоксары, 2008. - С. 139.
6. Зиновьева Мария Зиновьевна : [некролог] // Чебоксар. правда. - 1999. - 31 авг. (№ 35). - С. 8.
7. Зиновьева Мария Зиновьевна // Энциклопедия агропромышленного комплекса Чувашской Республики. - Чебоксары, 2017. - С. 205.
8. Мадебейкин, И. Н. Зиновьева Мария Зиновьевна / И. Н. Мадебейкин // Краткая чувашская энциклопедия. - Чебоксары, 2001. - С. 173.
9. Мадебейкин, И. Н. Зиновьева Мария Зиновьевна / И. Н. Мадебейкин // Чувашская энциклопедия. - Чебоксары, 2008. - Т. 2 : Ж-Л. - С. 69.
10. Прокопьев, В. П. Мария Зиновьевна Зиновьевна: 1929-1999. Дороги неугомонной Марии / В. П. Прокопьев // Работники сельского хозяйства. - Чебоксары, 2014. - С. 159-172. - (Б-ка Президента Чуваш. Респ. ; т. 11).


Тĕп библиотекăн информаципе библиографи пайĕ
Пухса хатĕрлекенĕ Л. И. Евгеньева
Тел. 49-7-00, e-mail: library@kanash.cap.ru

**Канаш тăрăхĕн тĕп библиотеки**
**Информаципе библиографи пайĕ**

# Çĕре юратса, уншăн вăй хурса



**(05.03.1929-29.08.1999)**

***Социализмла Ĕç Геройĕ Мария Зиновьева çуралнăранпа 95 çул çитнĕ май***



**Шăхасан сали**
**2024 ç.**

## Вăрăмпуçĕнчи çĕр ăсти.

***«…Мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхнă. Манăн çамрăклăх Çавал хĕрринчи Тĕнсерте, Çĕрпӳ районĕнчи ялта, иртнĕ. Сакăнта вăй-хал пухса, çунат хушма хатĕрленнĕ. Çут тĕнчене эпĕ 1929 çулхи пуш уйăхĕн 5-мĕшĕнче килнĕ. Çăмăлах килмерĕ çав вăхăтра. Хаяр вăрçă тĕтĕмĕ сирĕлме тытăнчĕ. Аманса юлнă çĕршыв-анне ура çине çĕкленнĕ. Хаяр вăрçă суранĕ кашни çемье алăкĕнчен тенĕ пекех пырса шакканă. Атте, нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç çапăçса сывлăхне хавшатнăскер, нумаях пурăнаймарĕ, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Çемьере тăхăр ача. Пĕри тепринчен пĕчĕкрех. Ирĕн-каçăн ура синче, бригадир пырса чĕнмесĕр ĕçе тухса чупаттăм та, пуринчен каярах тавранаттăм, киле çитсен те аннене мĕн май килнĕ таран пулашма тăрăшаттăм. Тепĕр ирхине каллех хĕвелпе пĕрлех хирте.»***

Унăн тăрăшулăхне аслисем асăрханă, звеньевой пулма уйăрса лартнă. Ку вара Мария Зиновьевăна пушшех хавхалантарса янă. Вăл



хĕрарăмсене пĕр чăмăра пĕрлештерет. Хăçан мĕнле ĕç тумалли синчен каласа ăнлантарать, пуринпе те пĕр чĕлхе тупма тăрăшать. Хирте, ĕçленĕ хушăрах, стена хаçачĕ кăларать. Лайăххине ырлать, япăххине питлет. Ĕç ăнăçнăшăн хĕпĕртет. Çавăн чухне пурнăçне ĕмĕрлĕхех тăван партипе çыхăнтарма шутлать, коммунистсен ретне тăрать.

Çак шанăçа çуллен вăйлă тырпул çитĕнтернипе тӳрре кăларса пырать. Ĕçчен хĕре Çĕрпӳ парти райкомĕ Шупашкарти партипе совет кадрĕсем хатĕрлекен шкула вĕренме ярать, кунта вăл пĕрле вĕренекен Вася Платоновпа, Канаш районĕнчи Варăмпуçĕнчен килнĕскерпе, çывăх паллашать, унтан упăшкапа тăван ялне килет. Кунĕн-çĕрĕн кĕнекепе пурнăçа тишкерет, çĕннине тĕпчет. Специальнăй вăтам пĕлӳ илнĕ агроном пулса тăрать. Кунта ăна бригадир пулма суйласа лартаççĕ. Çавăн чухне Вăрăмпуçĕнчи бригада гектартан ултшар центнер çеç тĕш тырă туса илнĕ.

Мария Зиновьева çине тăрса малтисен опытне вĕренет, хăй агроном пулнине асра тытса, наука çитĕнĕвĕсене тишкерет. Çапах та самантлăха унăн юратнă ĕçрен уйрăлма тивет. Ял Совет ĕçтовкомĕн секретарĕ пулма суйлаççĕ, каярахпа КПСС райкомĕн инструкторĕ пулса ĕçлеме илеççĕ.

***-Килĕшет пек çĕнĕ ĕç, анчах ялти ĕç-пуç асран тухмасть, çыннисем те: «Хăçан каялла пирĕн пата килетĕн çак?» - тесе минретме тытанчĕç, бригадăри ĕçсем каллех япахланма пуçлани те пăшăрхантарчĕ, - аса илнĕ Мария Зиновьевна.***

Л.Алексеев журналистăн тĕрленчĕкĕнчен: ***«Çитмĕлмĕш çулсенче республикăри хуçалăхсенчи уй-хир бригадирĕсем хушшинче пысăк тухăçлă тыр-пул туса илессишĕн кĕрешӳ сарăлнăччĕ. Вĕсен хушшинче Канаш районĕнчи «Путь Ленина» колхоз бригадирĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Мария Зиновьевна Зиновьева та пурччĕ. Вăл çав вăхăтра районта чи кая юлнă бригадăна ертсе пыма тытăнчĕ. Унта нихçан та 7-8 центнертан ытла тырă илеймен».***

Мария Зиновьева чун-чĕре хĕлхемĕпе, кăмăл туртăмĕпе ĕçе кӳленнĕ. Ял хуçалăх специалисчĕ пулнă май хăйĕн пĕтĕм хастарлăхне çĕр ĕçне панă, çапла майпа тăпра пулăхлăхне лайăхлатма пулăшнă, ял çыннисен пултарулăхне çирĕп шанса тăнă, çĕнĕ ӳсĕм тума вĕсене куллен хавхалантарса пынă. Çапла вара Мария Зиновьева коллективĕ районти тата республикăри ытти бригадăсемшĕн малта пыракан опыта вĕренмелли шкул пулса тăнă. Кунта çĕнĕ сортсем çитĕнтернĕ, ытти хуçалăхсене паха вăрлăхпа пулăшнă.

Бригада çуллен гектар пуçне 30 центнер ытла тĕш тырă, 220-250 центнер çĕр улми, пин центнер ытла выльăх кăшманĕ туса илнĕ. Мария Зиновьева «Восток» колхозри Юнтапа бригадирĕпе Арсентий Михайлович Максимовпа килĕштерсе ĕçлеме договор тăвать.



«Пирĕн çĕр çинче лайăххи мĕн пур, вăл сирĕн те пулĕ», - тет. Урăхла каласан, кăмăл турамне çурмалла пайлать. Çак пуçарăва КПСС обкомĕн бюровĕ ырлать.

Саккăрмĕш пилĕкçуллăхри ӳсĕмсемшĕн Совет правительстви Мария Зиновьевăна Ленин орденĕ парса наградăлать. Тăххăрмĕш пилĕкçуллăхра тата тепĕр пысăк награда – иккĕмĕш хут Ленин орденĕ панă.

Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура чаплă çитĕнӳсем тунăшăн, 1976 çулта тĕш тырă тата ытти ял хуçалăх продукчĕсем туса илессине, вĕсене патшалăха сутассине ӳстерес тĕлĕшпе плансемпе обязательствăсене пурнăслас ĕçре паттăрлăх кăтартнăшăн Совет правительстви виççĕмĕш хут Ленин орденĕ тата Социализмла Ĕç Геройĕ ятне парса чыс та хисеп турĕ.